***Осипов Николай Николаевич***
канд. филол. наук, доцент
ФГБОУ ВО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ПСЕВДОНИМЫ ЛИСИН И АЙГИ

***Аннотация**: в статье рассматриваются характерные особенности происхождения псевдонима и фамилии отца народного поэта Чувашии Геннадия Николаевича Лисина-Айги, Николая Андреевича Лисина.*

***Ключевые слова**: фамилия, псевдоним, отец, сын, дед, Геннадий Айги, Николай Лисин, Андрей Айги, статья, очерк, пьеса, поэт.*

***Аннотаци**: статьяра чăваш халăх поэчĕн Г.Н. Айхин кун-çулне хушамачĕпе псевдонимĕ урлă тишкернĕ. Хушамачĕпе псевдонимĕн вăрттăнлăхĕсене уçса панă.*

***Тĕп сăмахсем**: хушамат, псевдоним, ашшĕ, ывăлĕ, аслашшĕ, Геннадий Айхи, Николай Лисин, Андрей Айги, статья, очерк, пьеса, поэт.*

2019 çул чăваш поэзийĕн «авангардисчĕсемшĕн» Чăваш халăх поэчĕ, тĕнче шайĕнче хăйне евĕрлĕ шухăшлавпа, тĕнчекурăмпа палăрма пултарнă сăмах ăсти – Геннадий Николаевич Лисин-Айхи çуралнăранпа 85 çул çитнине сумлăн уявланипе асра юлчĕ. Айхи пултарулăхĕн чылай енне çĕнĕ куçпа пăхса хаклас, унăн еткерне халăх хушшинче сарас хаваллă нумай ĕç пулса иртрĕ тăван литературăмăр анинче. Çавна май Г.Н. Айхи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕн хăш-пĕр саманчĕсене уçăмлатакан пулăм патне тепĕр хут таврăнас кăмăл пур.

2019 çулхи Айхи хушамат мĕнле пулса кайнă пирки шухăша ўкнĕ материалсем кун çути курнăччĕ [12; 13]. Çав материалсем пичетре чухне Лисин хушамат вăрттăнлăхĕн тупсăмĕ куç тĕлне пулчĕ. Геннадий Николаевич Айхипе Ева Николаевна Лисинсем хăйсен хушамачĕ чĕре патне выртманнине пĕрре мар асăннă. Кăна Ева Николаевна «Ку хушамат пирĕн аттене халăха вырăсла хушамат панă чухне «лекнĕ». Айхи çав хушамата юратмасчĕ. Чăнах та ĕнтĕ, пуш-


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пушă сăмах: унта йăх ячĕ те асаттесен ячĕ те çук» [10, с. 3] сăмахĕ черетлĕ хут çирĕплетет.

Геннадий Николаевича Лисин хушамат ашшĕнчен Николай Андреевич Лисинран куçнă. Николай Андреевич ашшĕ (Геннадий Николаевич аслашшĕ) – Андрей Семенович документсенче *Айги* хушаматпа тĕл пулать [13]. Ялта ăна *Айхи* Энтри тесе чĕннĕ пулнă. Кăна Чĕмпĕр кĕпĕрнинче 1918–1920 çулсенче «Çĕнĕ пурнăç» ятпа чăвашла тухса тăнă хаçат çирĕплетет. Асăннă хаçатăн 1920-мĕш çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 1-мĕшĕнчи номерĕнче Пăва уесĕнчи Турхан вулăсне кĕрекен Çĕньял çыннин Айхи Энтри çемйипе пулса иртнĕ ĕç-пуç пирки заметка çапăнса тухнă. «Турхан вулăсĕнчи Çĕнĕ ялта Айхи Энтри пур. Хăй вăл питĕ ватă. Ачи-пăчи çамрăк (аслисем хĕр пулнă, пурте качча кайса пĕтнĕ), ĕç патне çыпăçайман-ха, пурте шкула çӳреççĕ. Çавăнпа вăл çĕрне тахçантанпах акаймасăр пурăнать. Тĕрлĕ пахча çимĕçсен вăррисене тăва-тăва сутса, ыйткаласа çӳресе анчах тăранкаласа пурăнкалать…» [6] вулатпăр хаçатăн тваттăмĕш страницинче вырăн тупнă «Пуп куçĕ нӳхреп куçĕ» материалта. Кунта малалла прихутри чиркӳ пачăшки Айхи Энтри патне çулталăкшăн чиркӳне тӳлемелли япаласене илме пыни пирки сăмах пырать. Ку вăхăт тĕлне чиркӳсене патшалăхран уйăрса унта тăрăшакансене шалу тӳлеме пăрахнине каласа хăвармалла. Çавăн пекех чиркӳсене хĕсĕрлес кампани те пуçланнă. Çавна пула прихутри кашни çыннăн чиркӳ валли тыр-пул тĕрлĕ виçепе уйăрмалла пулнă. Сăмахран Аслă Арапуç чиркĕвĕн прихутне кĕрекен ял çыннисем çак ыйтăва прихут пухăвĕнче йышăннă виçепе пуçтарнă. Кун пирки хаçатăн 1918 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчи номерĕнче «Аслă Арапуçĕнчи чиркӳ (приход) пухăвĕ» статьяра тĕплĕ çырса кăтартнă. «…Çавăнпа приход пухăвĕ пупсене-тиечуксене пурăнма май пултăр тесе приходри пур чĕрĕ чунтан вĕсене 10-шар кĕрепенке ыраш-и, çур тырри-и памалла турĕç. …пупне 6 кĕрепенке пултăр терĕç, тиечукне 4 кĕрепенки…» [7]. Чиркӳсене хĕсĕрлес кампанипе усă курса «Пуп куçĕ нӳхреп куçĕ» материал авторĕ «Пĕлсе тăракан» текенскер сăрăсене ытларах та çăратса яни куç кĕрет. Айхи Энтрин «ачи-пăчи çамрăк … ĕç патне çыпăçайман-ха…» тени ӳстеререх каланăн туйăнать. Тӳлеве кил хуçисĕрех илсе тухса кайнине сăлтавлани.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ку вăхăт тĕлне Андрей Семенович Айхин ывăлĕ Николай Андреевич 16 тултарнă пулнă. Йăмăкĕсем, паллах, унран кĕçĕн, Феодора 12-ре т. ыт. те. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче 16-ри çамрăк хăйне ача тесен кӳренме те пултарнă.

Çапла вара эпир пĕр документпа хаçатри материал урлă Геннадий Николаевич Лисин-Айхин литературăри хушамачĕн тупсăмĕ патне пĕр утăм турăмăр. Çавăн пекех поэт аслашшĕн кун-çулĕпе кĕскен паллашрăмăр. Çапах та Айхи сăмах-ăнлавăн пĕлтерĕшĕ вăрттăнлăхрах юлать-ха. Ку уйрăммăн тумалли тĕпчев тейĕпĕр.

Тĕнчипе паллă поэт аслашшĕн хушамачĕ Айхи пулнине пĕлтĕмĕр. Унăн ывăлĕн, Николай Андреевичăн, хушамачĕ те кăсăклă. Николай Андреевич çумне Лисин хушамат епле çыпçăннă-ши? Ку ыйтăвăн хуравне те, шăпах, Чĕмпĕр кĕпĕрнинче тухса тăнă «Çĕнĕ пурнăç» хаçат хуравлама пултарать. 1920 çулхи пуш (март) уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухнă хаçатăн юлашки страницинче «Çĕнĕ ял, Турхан вулăсĕ, Пăва уесĕ» материалта «Лисин» хушамат тĕл пулать. «Çĕнĕ ялта «Фронт эрнинче» Турханти просветительный кружок спектакль лартрĕ. Спектакльне шкулта лартрĕç. Çынсем курма нумай пухăнчĕç, ваттисем те çамрăксем те, мĕншĕн тесен халиччен Çĕнĕ ялта ун пек спектакльсем пулман. «Порченый», «Пăсăлнăскер» ятлă пьесăна лартрĕç чăвашла. Ун хыçĕнчен шкул ачисем малтан виççĕн Крыловăн юмахне «Два мужика» турĕç [вуларĕç – *О.Н.*] унтан пĕр пĕчĕк пьеса лартрĕç. Çав пьесса ачасем хăйсем шухăшласа çырнă, вĕсен хушамачĕ «Лисин». Спектакль куракансен кăмăлне пит килнĕ, пĕтсессĕн «тата пулать-и?» тесе ыйтаççĕ.

«Лисин» шухăшласа çырнă пьеса ак çапла «Икĕ ача тавлашни». Ачасем иккĕшĕ те арçын: пĕри Ванюк, тепри Палюк ятлă. Ванюк сĕтел хушшинче кĕнеке вуласа ларать, уроксем хатĕрлет. Хăйпе хăй калаçать: Çак самана тухни пурне те аван пулчĕ. Вĕренекен ачасене пире ай аван-çке. Учительсем халĕ йăлт тăнлантараççĕ. Ĕлĕк нумайăшне патакпа ăнлантарнă. Патакпа ачасем хавас вĕренмен, хальхи ачасем питĕ хавас вĕренеççĕ.

Палюк кĕрет. Аван-и Ванюк?


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ванюк. Аван, килях! …» [8]. Малалла пьесăра икĕ çамрăк ача ĕлĕкхипе хальхи (хăй вăхăчĕ) тата чухăнсемпе пуянсем, коммунсем пирки тавлашаççĕ. Ванюк çĕнĕ пурнăçа ырлать, Палюк коммунсене хурлать, кивĕ пурнăçа кăмăллать. Вĕсем тавлашса пьеса вĕçĕнче тытăçсах каяççĕ. Кĕске кăна ÿкерчĕк, хăй вăхăчĕн паллисене тÿррĕн кăтартни. Çак пьесăн авторĕ ачасем тенĕ, апла пулин те пĕр хушамата «Лисина» кăна асăнать хаçатри заметкăн авторĕ. Эппин пьесăна çыракансем хăйсен чăн хушамачĕсене кăтартма килĕшмесĕр псевдонимпа «Лисин» алă пуснă. Пьеса çыракан ачасенчен пĕри, шăпах, Андрей Семенович Айхин ывăлĕ Николай Андреевич пулма пултарни иккĕленÿсĕр. Ку вăхăтчен (1920 çулччен) Николай Андреевич аслашшĕ ятĕнчен тунă Семенов хушаматпа çÿренĕ пулмалла. Пьеса авторлăхне чăн хушаматпа палăртма 16-ри çамрăк саманине кура, паллах, пултарайман. Çамрăк «драматургсем» çеç мар, хаçат-журнала çыракансем те вăл вăхăтра псевдонимпа усă курнă, тата кашни материала тенĕ пекех уйрăм хушма ятпа кун çути кăтартнă. Çĕнĕ ялти – Çĕньялти (*О.Н.*) спектакль пирки хаçата çыракан та заметка хыçне «Куракан» тесе алă пуснă. Кунăн сăлтавĕ пуриншĕн те паллă: вăл вăхăтри классен кĕрешĕвĕн çивĕчлĕхĕ.

Илемлĕ литература хайлавне Лисин хушаматпа пичетлекен часах татах тупăннă. 1924 çулхи «Сунтал» журналăн пĕрремĕш номерĕнче, 5-мĕш страницăра В.И. Ленин вилнишĕн хурланса çырна «Ленĕ[и]н» [9] ятлă сăвă пичетленнĕ. Унăн авторĕ – «Лиççин Микулайĕ». Çÿлерех асăннă «Икĕ ача тавлашни» пьесăпа Ленина халалланă сăввăн авторĕ Николай Андреевич Лисин тесе калама пултаратпăр. Пьеса хайлакан ачасенчен Николай Андреевичсăр пуçне урăх никамах та литературăпа кăсăкланса кайман çав çулсенче Çĕньялта. «Фронт эрнинче» сцена çинче лартма çырнă пьеса валли çуралнă псевдоним пурăна-киле хушамата çаврăннă темелле. Николай Лисин хăй кăна мар, ачисем те Лисин хушаматпа çÿренĕ, çÿреççĕ те.

Çапла вара Айхи хушаматран псевдоним, Лисин псевдонимран хушмат пулса кайнине курса ĕнентĕмĕр.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Кунта тата çакна палăртса хăвармалла. 2019 çулта Г.Н. Айхин çамрăк чухне çырнă сăввисен «Вуниккĕри Айхи» ятлă пуххинче Ева Лисина аслашшĕ пирки «…Ĕнентерӳ хутĕнче Энтри Айги çинчен «вăл хутла пĕлмен хресчен» тесе çырни пур. Ку тĕрĕс мар. Халах хушшинче: «Вăл хут пĕлнĕ çын пулнă, ывăлне (пирĕн аттене. – *Е.Л.*) Евангелипе усă курса вулама вĕрентнĕ» теттчĕç» [3] тенĕ. Ева Николаевна шухăшне аталантарса çакна палăртса хăварас кăмăл пур: Андрей Семенович хутла пĕлменнине документ çирĕплетет тейĕпĕр, анчах та «Евангелипе усă курса вулама вĕрентнĕ» тенине кунта Андрей Айгин ывăлĕ Николай Андреевич Лисин халăха хутла вĕрентнине асăнмалла. 1920-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче хура халăх хушшинче хутла пĕлменлĕхе пĕтерес шутпа çĕршывра «ликвидация безграмотности» текен кампани вăй илет. Çавна май кашни ялтах ватти-вĕттине вулама-çырма вĕрентме çынсем уйăрса хураççĕ. Ытларах ваттисене вĕрентме уйрăм çынсене çирĕплетнĕ пулнă. Çамрăксем ку вăхăт тĕлне шкула çӳреме пуçланă ĕнтĕ. 1926 çулта Çĕньял çыннисене хутла вĕрентме Н. Лисинпа Е. Несетерова уйăрни паллă. Н. Лисин Аслă Арапуçĕнчи виçĕ каслă шкулта пĕлӳ илнине те асăннă унта. Çапла вара Ева Николавна асăнакан «вулама вĕрентнĕ» çын вĕсен аслашшĕ мар ашшĕ пулса тухать.

Юлашкинчен çӳлерех илсе кăтарнă «Пуп куçĕ нӳхреп куçĕ» («очерк» *О.Н.*) тата «Икĕ ача тавлашни» пьеса авторлăхне палăртма пикенсе пăхар. Пĕрремĕш материалăн авторĕ «Пĕлсе тăракан» иккĕмĕшĕн – «Лисин». Пирĕн шутпа, тем тесен те çак икĕ автор пĕр çын. «Айхи йăх тымарĕ» [11] тĕпчев авторĕ М. Мадюкова «Айхи» хушамат пирки» статьяра «Ку хушамат пĕрремĕш хут прессăра 1920 çулта курăнать, аслашшĕ – Айхи Энтри пирки очерк çырнă чух» [11, с. 62] тенĕ. Кунта «Пуп куçĕ нӳхреп куçĕ» очерк пирки сăмах пырать. Унта Айхи Энтри пурнăçне самай тĕплĕ çутатнă.

***Список литературы***


1. Русско-чувашский словарь. 40000 слов / под. ред. И.А. Андреева и Н.П. Петрова. – М.: Советская Энциклопедия, 1971. – 893 с.

2. ЧГИА. Ф.507. Оп. 1. Д. 46. 230 об.

3. ЧГИА. Ф.507. Оп. 1. Д. 46. 232 об.




Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

4. ЧГИА Ф.577.Оп. 3. ДД. 1–12.

5. ГАУО Ф.156. Оп. 2. Д. 619.

6. Çĕнĕ пурнăç. – 1 Февраля (нарăс) 1920. – №5 (135).

7. Çĕнĕ пурнăç. – 1 Июня (çĕртме) 1918. – №12 (12).

8. Çĕнĕ пурнăç. – 21Март (пуш) 1920. – №7 (137).

9. Лиççин Микулайĕ. Ленĕ[и]н. Сунтал. – 1924. – №1. – С. 5.

10. Лисина Е.Н. Вуниккĕри Айхи двенацатилетний Айги. – Чебоксары: ИП Н.А. Бриндина, 2019. – 204 с.

11. Мадюкова М. Шкул вальсĕ. Калавсемпе тĕрленчĕксем, тĕпчев ĕçĕсемпе статьясем, сăвăсемпе поэма. – Шупашкар: Çĕнĕ Вăхăт, 2019. – 120 с.

12. Осипов Н.Н. Айхи хушамат мĕнле пулса кайнă. Тăван Атăл. – 2019. – №9. – С. 74–77.

13. Осипов Н.Н. Фамилия Айги [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://elibrary.ru/item.asp?id=39226443


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)